26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ФЕВРАЛЬ 24 ЮНКУН 44(6281) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

1943 çулти февралĕн 23-мĕшĕ. *Мускав хули.*

№ 95.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем! Паян эпир Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине уявлатпăр.

Хĕрлĕ Çара тунăранпа пĕр чĕрĕк ĕмĕр иртрĕ. Хĕрлĕ Çара ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç кĕрешме, пирĕн çĕршыва чуралантарма ăмсанакансене хирĕç кĕрешме тунă. 1918 çулти февралĕн 23-мĕш кунĕ, Хĕрлĕ Çарăн отрячĕсем Псковпа Нарва хулисем патĕнче нимĕç захватчикĕсен войскисене пуçĕпех çапса аркатнă кун—Хĕрлĕ Çар çуралнă кун пулса тăнă.

1918—1921 çулсенче ютçĕршыв захватчикĕсене хирĕç вăйлăн кĕрешсе, Хĕрлĕ Çар пирĕн совет çĕршывĕн чыслăхне, ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне хÿтĕлесе хăварчĕ, пирĕн çĕршыври халăхсен правине, хăйсен пурнăçне Аслă Ленин вĕрентнĕ пек тумалли правăна хÿтĕлесе хăварчĕ.

Çирĕм çул хушши Хĕрлĕ Çар совет халăхĕн мирлĕ строительство ĕçне сыхласа тăчĕ. Ютçĕршыв захватчикĕсем пирĕн çĕр çине тапăнма хăтланнисене пирĕн çĕршыври халăхсем нихăçан та манман, çавăнпа та Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне тĕреклетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнă, ăна чи лайăх вăрçă техникипе пуянлатнă тата совет воинĕсен кадрĕсене пысăк юратупа вĕрентсе ÿстерсе пынă.

Хĕрлĕ Çар мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем хушшинчи мирпе туслăха хÿтĕлекен çар пулса тăрать. Ăна ютçĕршывсене тытса илме мар, Совет çĕршывĕн чиккисене хÿтĕлеме тунă. Хĕрлĕ Çар мĕнпур халăхсен прависене тата вĕсен никама пăхăнманлăхне яланах хисепленĕ.

Анчах та 1941 çулти июнь уйăхĕнче гитлерла Германи пирĕн çĕршыв çине ултавлăн тапăнчĕ, пĕрпĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă договора ирсĕррĕн те кăнттамăн пăсрĕ. Çавăнпа Хĕрлĕ Çарăн, хамăрăн тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен хÿтĕлесе хăварас тата вĕсене пирĕн çĕршывран хăваласа кăларас тесе, ирĕксĕрех похода тухмалла пулчĕ. Çак вăхăтран пуçласа Хĕрлĕ Çар гитлерла войскăсене хирĕç вилĕмле кĕрешекен çар пулса тăчĕ, пирĕн тăван çĕршывăн оккупациленĕ районĕсенче пирĕн тăвансене асаплантарнăшăн тата мăшкăланăшăн нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешсе тавăракансен çарĕ пулса тăчĕ.

Хăй пурăнма пуçланăранпа 25 çул тултарнине Хĕрлĕ Çар гитлерла Германие тата унăн тарçисене—итальянецсене, венгерсене, румынсене, финсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçăн татăклă самантĕнче кĕтсе илет.

Нимĕç фашисчĕсен кĕтĕвĕсем тапăнса килнине хирĕç Хĕрлĕ Çар историре пулман пек паттăррăн кĕрешме пуçланăранпа çирĕм уйăх иртрĕ. Европăра иккĕмĕш фронт çуккине пула Хĕрлĕ Çар вăрçăн пĕтĕм йывăрлăхне пĕччентех тÿссе ирттерет. Апла пулин те Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсен кĕтĕвĕсем хĕссе килнине тÿссе ирттерчĕ кăна мар, вăл тата вăрçă пынă вăхăтра фашистсен çарĕсемшĕн аçа-çиçĕм пулса тăчĕ.

1942 çулти çуллахи тата кĕркуннехи йывăр çапăçусенче Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăксен çулне пÿлсе лартрĕ. Севастопольпе тата Одессăна паттăррăн хÿтĕленине, Мускав патĕнчи тата Кавказ тăвĕсем патĕнчи вăйлă çапăçусене, Ржев районĕнчи тата Ленинград патĕнчи вăйлă çапăçусене, Сталинград стенисем патĕнчи вăрçăсен историнче халиччен пулман пек аслă кĕрешĕве пирĕн халăх яланах асра тытĕ. Çав аслă çапăçусенче пирĕн паттăр боецсем, командирсемпе политработниксем Хĕрлĕ Çарăн кĕрешÿри ялавĕсене нихăçан асран кайми мухтавпа витрĕç, нимĕç фашисчĕсен çарĕсене çĕнтерме çирĕп никĕс туса хучĕç.

Виçĕ уйăх каярах Хĕрлĕ Çарăн войскисем Сталинград патĕнчи вырăнсенче наступлени тума пуçларĕç. Çав вăхăтран пуçласа вăрçă ĕçĕсенчи пуçарулăх пирĕн аллăра тăрать. Хĕрлĕ Çар тапăнса пырас хăвăртлăхсем тата унăн вăй-хăвачĕ вара чакмаççĕ. Халĕ Хĕрлĕ Çар хĕллехи йывăр условисенче 1.500 километр тăршшĕ выртакан фронтра тапăнса пырать тата пур çĕрте те пекех ăнăçусем тăвать. Çурçĕрте, Ленинград патĕнче, Центральнăй фронтра, Харьков патĕнчи вырăнсенче, Донбасра, Ростов патĕнче, Азов тинĕсĕпе Хура тинĕс çыранĕсенче Хĕрлĕ Çар гитлерла войскăсене çине-çинех пырса çапать. Виçĕ уйăх хушшинче Хĕрлĕ Çар Воронеж тата Сталинград облаçĕсен, Чечено-Ингуш, Çурçĕр Осети, Кабардино-Балкар тата Калмык автономлă республикисен, Ставропольпе Краснодар крайĕсен, Черкес, Карачаевски тата Адыгей автономлă облаçĕсен территорийĕсене, Ростов, Харьков тата Курск облаçĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех тăшманран тасатса ирĕке кăларчĕ.

Тăшмана Совет çĕршывĕнчен массăллăн хăваласа кăларас ĕç пуçланчĕ.

Çак виçĕ уйăх хушшинче мĕн улшăнчĕ-ха? Нимĕçсен çак пысăк ăнăççăрлăхĕсем мĕнрен килеççĕ? Çав ăнăççăрлăхсен сăлтавĕсем мĕнре-ха?

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра вăйсен шайлашăвĕ улшăнчĕ. Ĕç акă мĕнре: фашистла Германи ытларах та ытларах хавшаса тата вăйсăрланса пырать, Совет Союзĕ вара хăйĕн резервĕсене ытларах та ытларах ĕçе кĕртсе тата вăйланса пырать. Вăхăт фашистла Германие хирĕç ĕçлет.

Европăн çар промышленноçне хăй валли ĕçлеттерекен гитлерла Германин юлашки вăхăтчен техника тата пуринчен малтан танксемпе самолетсем Совет Союзĕнчен нумайрах пулнă. Çавăнпа вăл вăйлăрах пулнă. Анчах та вăрçăн çирĕм уйăхĕ хушшинче лару-тăру улшăнчĕ. ССР Союзĕн çар промышленноçĕнчи рабочисем, работницăсем, инженерсемпе техниксем хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçленине пула вăрçă вăхăтĕнче танксем, самолетсем, орудисем туса кăларасси ÿсрĕ. Çав вăхăтрах Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра тăшман вăрçă техники енĕпе, уйрăмах танксемпе самолетсем тата орудисем енĕпе питех те пысăк çухатусем тÿсрĕ. Хĕрлĕ Çар 1942—1943 çулти хĕлле виçĕ уйăх наступлени тунă вăхăтра кăна нимĕçсем 7.000 ытла танк, 4.000 самолет, 17.000 оруди тата ытти хĕçпăшалсем нумай çухатрĕç.

Паллах, нимĕçсем çак çухатусене витме тăрăшса пăхĕç, анчах çакна тума çăмăлах пулмасть, мĕншĕн тесен техника енĕпе тÿснĕ çав пысăк çухатусене витме противника сахал мар вăхăт кирлĕ пулать. Вăхăт вара кĕтмест.

Гитлерла Германи ССР Союзне хирĕç вăрçă пуçланă чухне унăн мобилизациленĕ тата çапăçма хатĕр тăракан войскăсем, Хĕрлĕ Çарпа танлаштарсан, нумайрах пулнă. Çавăнпа вăл вăйлăрах пулнă. Анчах çирĕм уйăх хушшинче çак енĕпе те лару-тăру улшăнчĕ. Оборонăллă тата наступлениллĕ çапăçусенче Хĕрлĕ Çар вăрçă пынă вăхăтра нимĕç фашисчĕсен 9 миллиона çити салтакĕпе офицерне стройран кăларчĕ, вĕсенчен 4 миллион çынран кая мар çапăçу хирĕсенче вилсе пĕтнĕ. Гитлер Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта янă румынсен, итальянецсен тата венгерсен çарĕсене Хĕрлĕ Çар йăлтах аркатса тăкрĕ. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче кăна Хĕрлĕ Çар противникăн 112 дивизине çĕмĕрсе тăкрĕ, çавăн чухне 700.000 çынна ытла вĕлернĕ тата 300.000 çынна ытла тыткăна илнĕ.

Паллах, çак питех те пысăк çухатăва витме нимĕç командованийĕ пур майсемпе те тăрăшĕ. Анчах, пĕрремĕшĕнчен, нимĕç çарĕсен вăйсăр енĕ вăл çынсем çитменни пулса тăрать, çавăнпа та çав çухатăва мĕнле майпа витесси паллă мар. Иккĕмĕшĕнчен, нимĕçсем мĕнпур тĕрĕс тата тĕрĕс мар майсемпе хăтланса çынсене кирлĕ чухлĕ шăлса пуçтарма пултарĕç тесе шутласан та, вĕсене пухса вĕрентсе хатĕрлеме сахал мар вăхăт кирлĕ пулать. Вăхăт вара кĕтмест.

Гитлер çарĕ Совет Союзне хирĕç вăрçа тухнă чухне унăн Европăра икĕ çула яхăн пысăк вăрçă туса пухнă опыт пулнă, çав вăрçа вĕсем вăрçăн чи çĕнĕ средствисемпе усă курса туса пынă; Хĕрлĕ Çарăн вара вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче, паллах, вăрçăри çавăн пек опыт пулман-ха тата пулма та пултарайман. Çавăнпа та нимĕç фашисчĕсен çарĕ вăйлăрах пулнă. Анчах та çирĕм уйăх хушшинче çак енĕпе те лару-тăру улшăнчĕ. Вăрçă пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çар кадровăй çар пулса тăчĕ. Вăл тăшмана, хальхи вăрçă науки хушнă пек, унăн вăйсăр тата вăйлă енĕсене шута илсе шанчăклăн çапма вĕренсе çитрĕ. Хĕрлĕ Çарăн çĕршер пин тата миллионшар боецĕсем хăйсен хĕçпăшалĕн мастерĕсем, винтовкăна, хĕçе, пулемета, артиллерие, миномет ĕçне, танк ĕçне, сапер ĕçне, авиацие лайăх пĕлекен мастерсем пулса тăчĕç. Хĕрлĕ Çарăн вуншар пин командирĕсем войскăсене ертсе пырас ĕçĕн мастерĕсем пулса тăчĕç. Вĕсем хăйсен хăюллăхĕпе паттăрлăхне çапăçу хирĕнче войскăсене ертсе пырассипе çыхăнтарма вĕренсе çитрĕç, ăссăр та сиенлĕ линейнăй тактикăна пăрахăçа кăларчĕç тата маневрсем тăвас тактикăна çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма тытăнчĕç.

Çак япала ăнсăртран пулнă теме çук: Хĕрлĕ Çар командованийĕ совет çĕрне тăшманран ирĕке кăларать кăна мар, вăл тата тăшмана пирĕн çĕр çинчен чĕррĕн те кăларса ямасть, тăшман çарĕсене хупăрласа илсе пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çар искусствин чи лайăх тĕслĕхĕ пулма пултаракан пысăк операцисене пурнăçа кĕртет. Çакă вăл, паллах, пирĕн командирсем вĕренсе çитнине кăтартакани пулса тăрать.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, Хĕрлĕ Çар командованийĕн тĕрĕс стратегийĕпе пирĕн командирсен ĕçе туса пыракансен пултаруллă тактики кăна çакăн пек питех те паллă факт патне, нимĕçсен 330.000 çынран тăракан суйласа илнĕ пысăк çарне Сталинград патĕнче хупăрласа илсе пĕтерсе тăкасси патне илсе пыма пултарнă.

Ку тĕлĕшпе нимĕçсен ĕç чылай начартарах тăрать. Вĕсен стратегийĕн çитменлĕхсем пур, мĕншĕн тесен вăл яланах противникăн вăйĕсемпе майĕсене хакламасть тата хăйĕн вăйĕсене ытлашши пысăка хурать. Вĕсен тактики яланах пĕр пек, мĕншĕн тесен вăл фронтри ĕçсене уставăн пĕр-пĕр параграфĕ хушнă пек туса пыма тăрăшать. Устав хушнисене пурнăçа кĕртме обстановка май панă чухне нимĕçсем хăйсен ĕçне тĕрĕс тăваççĕ. Çакăнта вĕсен вăйĕ. Обстановка йывăрланса уставăн пĕр-пĕр параграфĕпе «килĕшме» пăрахсан, устав тăрăх палăртса хуман решенисене йышăнма кирлĕ чухне нимĕçсем ним тума та аптăраççĕ. Çакăнта вĕсен тĕп вăйсăрлăхĕ.

Юлашки виçĕ уйăх хушшинче нимĕç войскисене поражени тÿстернĕ тата Хĕрлĕ Çара ăнăçусем тума май панă сăлтавсем çакăн пек ĕнтĕ.

Анчах çакă вăл Гитлер çарне пĕтерсе тăкнине пĕлтермест, Хĕрлĕ Çарăн ĕнтĕ Гитлер çарне пирĕн çĕршывăн хĕвеланăç чиккисем патне çитиччен хăваламалли çеç юлать, тесе шутлама май памасть. Çакăн пек шутлани хамăра айванла тата сиенлĕн лăплантарни пулнă пулĕччĕ. Çапла шутлани—хамăрăн вăйсене ытлашши хак пани, противникăн вăйĕсене хакламанни тата авантюризма кĕрсе ÿкни пулнă пулĕччĕ. Тăшман поражени тÿсрĕ, анчах ăна çĕнтерсе тăкман. Хĕрлĕ Çар пырса çапнине пула нимĕç фашисчĕсен çарĕ кризис пурăнса ирттерет, анчах çакă ĕнтĕ вĕсен çарĕ вăй илме пултарас çуккине пĕлтермест. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ пĕтмен-ха, — вăл халĕ çеç саралса тата хĕрÿленсе пырать. Нимĕçсем пирĕн çĕрĕн пĕр километрне те пулин çапăçусăрах пăрахса хăварĕç тесе шутлани ăссăр пулнă пулĕччĕ.

Хĕрлĕ Çарăн малашне те ултавлă та тискер, халлĕхе вăйлă тăшмана хирĕç хаяр кĕрешÿ туса пымалла пулать. Çак кĕрешÿ вăхăт, жертвăсем ыйтать, хамăрăн мĕнпур вăя хума тата мĕнпур майсене мобилизацилеме хушать. Эпир Совет Украинине нимĕç пусмăрĕнчен ирĕке кăларма тытăнтăмăр, анчах миллионшар украинецсем халĕ те нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕ айĕнче асапланаççĕ-ха. Белоруссире, Литвара, Латвире, Эстонире, Молдавире, Крымра, Карелире халлĕхе нимĕç оккупанчĕсемпе вĕсен тарçисем хуçаланаççĕ-ха. Тăшман çарĕсене хăватлăн пыра-пыра çапнă, анчах тăшмана çĕнтермен-ха. Нимĕç захватчикĕсем хаяррăн хирĕç тăраççĕ, контратакăсем тăваççĕ, оборона тумалли вырăнсенче çирĕпленсе ларма хăтланаççĕ тата çĕнĕ авантюрăсем тума пултараççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн ретсенче йăваш чунлăх валли, тимсĕрлĕх валли, каппайса ларни валли вырăн пулма пултараймасть.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе пĕтĕм совет халăхĕ савăнать. Анчах Хĕрлĕ Çарăн боецĕсен, командирсемпе политработникĕсен пирĕн учитель Ленин хушса хăварнисене çирĕппĕн асра тытмалла: «Пĕрремĕшĕ — çĕнтерÿпе илĕрсе, мухтанса лармалла мар, иккĕмĕшĕ—çĕнтерсе илнисене çирĕплетсе хумалла, виççĕмĕшĕ — тăшмана пĕтĕмпе пĕтерсе тăкиччченех çапмалла», тенĕ Ленин.

Хамăрăн тăван çĕршыва ылханлă тăшманран ирĕке кăларас тесе, фашистла нимĕç захватчикĕсене татăклăнах çĕнтерес тесе,—

ÇАКĂН ПЕК ПРИКАЗ ПАРАТĂП:

1. Çапăçури пултарулăха ывăнма пĕлмесĕр ÿстерсе пымалла тата пĕтĕм Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕнче дисциплинăна, йĕркелĕхе тата организованноçа çирĕплетсе пымалла.

2. Тăшман войскисене пырса çапассине вăйлатмалла, тăшмана ывăнма пĕлмесĕр тата çине тăрса хăваласа пымалла, ăна оборона тумалли вырăнсенче çирĕпленсе ларма памалла мар, ăна кăнтăрла та, çĕрле те канăç памалла мар, тăшманăн коммуникацийĕсене татмалла, тăшманăн войскисене çавăра-çавăра илсе, вĕсем хĕçпăшала пăрахма килĕшмеççĕ пулсан, пĕтерсе тăкмалла.

3. Тăшман тылĕнче партизанла кĕрешÿ çулăмне анлăн сарса ямалла, тăшманăн коммуникацийĕсене аркатса тăкмалла, чугунçул кĕперĕсене сирпĕнтерсе ямалла, тăшмана войскăсем куçарса килме тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем турттарса килме чăрмантармалла, çар склачĕсене сирпĕнтерсе тата вут тĕртсе ямалла, тăшманăн гарнизонĕсем çине тапăнмалла, чакса пыракан тăшмана пирĕн ялсемпе хуласене çунтарса яма памалла мар, наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа, мĕнпур майсемпе пулăшмалла.

Çакăнта ĕнтĕ пирĕн çĕнтерĕвĕн шанчăкĕ.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем!

Совет правительствипе пирĕн большевикла парти ячĕпе Сире Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун ырă сунса саламлатăп.

Сывă пултăр пирĕн аслă тăван çĕршыв!

Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар, пирĕн паттăр Тинĕс-Çар Флочĕ, пирĕн хăюллă партизансемпе партизанкăсем!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿсем тума хавхалантарса ертсе пыракан большевиксен партийĕ!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
И. СТАЛИН.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем СУМЫ, АХТЫРКА, ЛЕБЕДИН, МАЛОАРХАНГЕЛЬСК хулисене йышăнса илнĕ

1. Февралĕн 23-мĕшĕнче Украинăра пирĕн войскăсем, малалла наступлени туса пырса, СУМЫ, АХТЫРКА, ЛЕБЕДИН хулисене тытса илнĕ.

2. Курск облаçĕнче пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн МАЛОАРХАНГЕЛЬСК хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

СССР хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховный Главнокомандующийĕ И. В. СТАЛИН юлташ Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа 1943 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче Лондонра пулнă митинга янă телеграмма

Великобританин Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнине уявлакан пур гражданĕсемпе гражданкисене те сирĕн митинг урлă Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен ячĕпе саламлатăп тата тав тăватăп.

Англи халăхĕн туслăхлă туйăмĕсене Совет Союзĕн çарĕ пирки çавăн пек палăртни пирĕн çĕршывсен хĕçпăшаллă вăйĕсем, пĕрле наступлени туса, пирĕн пĕрлехи тăшмана аркатса тăкас вăхăт çывăххине ĕненсе тănине çирĕплетет.

И. СТАЛИН.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 25 çул тултарнă ятпа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградаласси çинчен

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 25 çул тултарнă ятпа Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлесе вĕсене вĕрентнĕшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса çаксене наградăлас:

1. Алексей Алексеевич **Алексеева** — полковнике, Чăваш АССР çарĕç комиссарне.
2. Михаил Александрович **Ананьина** — ВКП(б) Улатăр райкомĕн çарĕç пайĕн заведующине.
3. Николай Николаевич **Анисимова** — Улатăр хулинчи çарĕç комиссариачĕн работникне.
4. Вера Петровна **Баусовăна** — Кувакино районĕнчи çарĕç комиссариачĕн работникне.
5. Николай Кузьмич **Вахрамеева** — Елчĕк районĕнчи çарĕç комиссарне.
6. Павел Васильевич **Воробьева** — Улатăр хулинчи çарĕç комиссариачĕн всевобуч инструкторне.
7. Владимир Николаевич **Дворникова** — Етĕрне районĕнчи çарĕç комиссарне.
8. Иван Григорьевич **Ежова** — Çĕмĕрле районĕнчи çарĕç комиссариачĕн работникне.
9. Григорий Осипович **Иванова** — Чăваш АССР Çарĕç комиссариачĕн работникне.
10. Димитрий Петрович **Кирпичева** — ВКП(б) Чкаловски райкомĕн çарĕç пайĕн заведующине.
11. Михаил Николаевич **Князькова** — ВКП(б) Етĕрне райкомĕн çарĕç Комиссариачĕн работникне.
12. Георгий Захарович **Коробкова** — Хĕрлĕ Чутай районĕнчи çарĕç Комиссариачĕн работникне.
13. Матвей Степанович **Макарова** — Канаш хулипе Канаш районĕнчи çарĕç комиссарне.
14. Борис Николаевич **Михайлова** — Шупашкар хулинчи çарĕç комиссариачĕн всевобуч инструкторне.
15. Геннадий Александрович **Михайлова** — Канаш хулинчи çарĕç комиссариачĕн работникне.
16. Иван Петрович **Петрова** — Чăваш АССР-ĕн Облаçри çарĕç комиссариачĕн политотдел инструкторне.
17. Иван Иванович **Печалина** — Чăваш АССР-ĕн Облаçри çарĕç комиссариачĕн работникне.
18. Аркадий Петрович **Рябова** — ВКП(б) Обкомĕн çарĕç пайĕн заведующине.
19. Иван Алексеевич **Смирнова** — Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн работникне.
20. Александр Николаевич **Соколова** — Чăваш АССР-ĕн Облаçри çарĕç комиссариачĕн работникне.
21. Иван Алексеевич **Тямушкина** — Шăхасан районĕнчи çарĕç комиссарне.
22. Николай Трифонович **Тютикова** — Чăваш АССР-ĕн Облаçри çарĕç комиссариачĕн политотдел начальникне.
23. Николай Иванович **Чурбанова** — ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн çарĕç пайĕн заведующине.
24. Андрей Федорович **Шаргаева** — Чăваш АССР-ĕн Облаçри çарĕç комиссариачĕн работникне.
25. Андриан Сергеевич **Шамшурова** — Чăваш АССР-ĕн Облаçри çарĕç комиссариачĕн работникне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулти февралĕн 22-мĕшĕ.

ВЦСПС-ра

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ промышленность заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен заводсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС Н-ски завод (завод директорĕн заместителĕ **Бунин** юлташ) пĕр промышленность енĕпе уйрăмах лайăх ĕçленине палăртнă. Тепĕр промышленность енĕпе ăна **иккĕмĕш преми** пама йышăннă.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ çак завод январь уйăхĕнче лайăх ĕçленине паллă тунă.

Çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Молгачкинăри пуçламăш шкулта вĕренекенсем, вĕренÿ пахалăхне лайăхлатса пынипе пĕрлех, колхоз ĕçне те активлăн хутшăнма тăрăшаççĕ. Шкул директорĕ, отечественнăй аслă вăрçă участникĕ Н. Андрюшкин юлташ вĕренекенсене фронта пулăшас тĕлĕшпе хавхалантарса пырать. Вăл пĕрре кăна мар ĕнтĕ вĕренекенсене фронтри боевой эпизодсем çинчен, фронт çывăхĕнчи çамрăк патриотсен ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Вĕренĕве шкул ачисем йĕркеллĕн çÿреççĕ, шкула çÿреме çул çитнĕ ачасем пурте вĕренеççĕ. Уйрăмах вĕренÿре 1-мĕш класс пример кăтартать. Ачасем пурте уроксене çÿреççĕ, вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Учительсем ачасене академик Лысенко çырăвĕпе паллаштарнă. Çакăн хыççăн ачасем уроксем хыççăн колхоза кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса пама тата çимелли çĕрулмисен тăррисене вăрлăхлăх касса хатĕрлеме тытăнчĕç. 4-мĕш класра вĕренекен Александр Отнюковпа Елена Андрюшкина пĕр кун хушшинче колхоза 24-шар килограмм кĕл пухса пачĕç.

4-мĕш класра вĕренекен ачасем тырă алланă, вăрлăхсем сортланă çĕрте те колхоза пулăшаççĕ.

Х. Лисин.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Украинăра **Тростянец** хулине. **Большая Писаревка** ятлă район центрне тата халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

Кубань çинче пирĕн войскăсем **Холомская, Ахтырская, Черноерковская** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех сапăсса пынă.

* * *

Февралĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 5 батарейине пусарнă, боеприпассен 2 складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен 6.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă тата хуралра тăракан карапне сиенленĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски часть 300 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллери батарейине, 9 миномет тата нумай боеприпассем тытса илнĕ. Кĕçĕн лейтенант Комерный ертсе пыракан подразделенири бронебойщиксем нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла куçса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пунктсенчен пĕриншĕн пынă çапăçура совет подразделенийĕсем нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла çавăрса илсе вĕлерсе пĕтернĕ. Унсăр пуçне тата çав çавăрса илнĕ гарнизона пулăшма васкакан гитлеровецсен ротине аркатса тăкнă. Тĕрлĕ грузсем тиенĕ 30 автомашина тата автоматсем, винтовкăсем, боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведка тăвакан отряд нимĕçсен боеприпассемпе продовольстви турттарса пыракан обозне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармейское районĕнче пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе мотопехотин хаяр контратакисене сире-сире янă. Пĕр участокра совет танкисчĕсем нимĕçсен 9 танкне, 2 бронемашинине, 8 противотанковăй орудине, пехота турттарса пыракан 12 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Н-ски соединенин чаçĕсем 3 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 70 танкне çити персе çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă.

* * *

Курскран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра нимĕçсен пехоти 18 танк пулăшса пынипе контратака тунă. Гусев юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн боецĕсем гитлеровецсене малтанхи позицисем патне хăваласа янă. Çак çапăçура противник çын тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ. Тăшманăн 7 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра совет подразделенийĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Сумы облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕн группи чугунçул станцине вăркăнса кĕнĕ те хуралра тăракан 38 нимĕçе вĕлернĕ. Партизансем стрелкăсене сирпĕтсе янă тата фронта яма хатĕрленĕ бронепоезда стройран кăларнă. Чернигов облаçĕнчи партизансем февралĕн малтанхи çурринче гитлеровецсен икĕ карательнăй экспедицине аркатса тăкнă. 100 çынна ытла вĕлернĕ. 10 пулемет, 42 винтовка, миномет тата автоматсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 302-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 572-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтаксем Клеменс Витка тата Рейнольд Григорацкий çапла каласа панă: «302-мĕш дивизие декабрь уйăхĕнче Францире Руан провинцинче васкавлăн йĕркеленĕ. Ку дивизие оккупациллĕ войскăсен ытти соединенийĕсенчен пĕтĕм подразделенисем кĕнĕ. Сăмахран, 332-мĕш пехотнăй дивизи 302-мĕш дивизи валли кашни ротăранах пĕрер взвод уйăрчĕ. 1943-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнче эпир фронта тухса кайрăмăр. Францире тăракан çамрăк нимĕç салтакĕсене пĕтĕмпех халĕ Российăна яраççĕ. Вĕсене вара резервра тăракан çынсем, Германире мобилизациленĕскерсем, улăштараççĕ. Францире эпир кинообозренисем пăхаттăмăрччĕ. Экран çинче нимĕç армийĕн ăнăçăвĕсемпе çĕнтерĕвĕсене кăтартатчĕç. Кунта, фронтра ĕç пĕтĕмпех урăхла курăнать. Фронт лини патне çитиччен вуншар километрта эпир чакса пыракан, аркатса тăкнă чаçсен мĕскĕн групписсене тĕл пултăмăр. Вĕсем çĕтĕк-çатăк, таса мар, салтак сăнне çухатнă. Вĕсем вара пире çапла каласа ăсатрĕç: «Вырăссем сире пĕтереççĕ», терĕç. Пиртен нумайĕшĕ вара хăраса ӳкрĕç. Вĕсем каланине малтанхи çапăçусемех çирĕплетрĕç. Пĕр эрне хушшинче вырăссем пирĕн полка аркатса тăкрĕç».

* * *

Курск облаçĕнчи Хмелевский поселокĕнчен чакас умĕн нимĕçсем 30 çурта ытла вут тĕртсе çунтарса янă. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем нӳхрепре пытанса пурăнакансем çине гранатăсем пăрахнă. Нӳхрепсенче пурăнакан нумай хĕрарăмсемпе ачасем вилнĕ.

Февралĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем хаяррăн çапăçса 150 нимĕç автоматчикне вĕлернĕ, 2 танка, хăй тĕллĕн çӳрекен орудие тата 20 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 18 пулемет, 100 ытла автомат пур тата боеприпассем нумай.

* * *

Краматорская хулинчен кăнтăралларахра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем пĕр рабочи поселок районĕнче тăшманăн мотопехотнăй батальонне аркатса тăкнă тата нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем сасартăк тапăнса халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнĕ. Хирĕç тăнă нимĕç гарнизонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Грайворонран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çав пунктсенчен пĕриншĕн пынă çапăçусенче нимĕç пехотине пĕр полк таран пĕтерсе тăкнă. Боеприпассен складне, япаласен тата продовольствин склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре пирĕн чаçсем халăх пурăнакан вăйлă тĕреклетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра совет подразделенийĕсем тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсене, çавăрса илсессипе хăратса, каялла чакарнă. Гитлеровецсем хăйсен хатĕрĕсене пăрахнă та васкасах каялла тăкнă.

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем çапăçса пырса малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем кăна тăшманран 18 оруди тата боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кун-каçа тăшманăн 12 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне, зенитнăй артиллери нимĕçсен 3 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансен отрячĕ, тăшманăн йышлăрах вăйĕсемпе çапăçса, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр отрядри партизансем çĕрле чугунçул разъездне сасартăк тапăннă. Чугунçул çинчи пур сооруженисене те çĕмĕрнĕ, 2 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата чугунçула темиçе тĕлте пăсса хунă.

* * *

Гитлерла çынçиенсем Ворошиловград облаçĕнчи Белолуцк ялĕнче вуншар мирлĕ çынна асаплантарса вĕлернĕ. Фашистла палăчсем врача Федосья Дубинскаяна, учительницăна Мария Чернышевăна, колхознике Иван Яровоя, унăн арăмне, хĕрне, кинне тата кинĕн икĕ çамрăк ачине, çавăн пекех тата ытти нумай çынсене персе вĕлернĕ. Нимĕçсем колхозниксен 120 çуртне ытла çунтарса янă, библиотекăна пĕтерсе хунă, больницăн мĕнпур оборудованине çаратса пĕтернĕ. Çав ялтан чакса каяс умĕн гитлерла ирсĕрсем стариксемпе хĕрарăмсене тата ачасене, мĕнпурĕ 90 çынна, чиркĕве хăваласа кĕртнĕ те унта питĕрсе лартнă. Бандитсем чиркĕве сирпĕнтерсе яма йăлтах хатĕрленсе çитнĕ пулнă. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем, яла пур енчен те пырса кĕнĕскерсем, нимĕç ирсĕрĕсене хăйсен усал шухăшне пурнăçа кĕртме паман.

Республикăри комсомолецсем фронта пулăшас ĕçре

Комсомолăн республикăри организацийĕсенче вĕренсе ӳснĕ çамрăксенчен чылайĕшĕ фронтра тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ. Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн вĕсенчен чылайĕшĕ ССР Союзĕн орденĕсене илнĕ. Вĕсен шутĕнче ВЛКСМ Куславкка райкомĕн секретарĕ пулнă, халĕ майор К. К. Кузнецов Хĕрлĕ çăлтăр орденĕ тата «За отвагу» медаль илнĕ. ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ пулнă, халĕ капитан Г. Ф. Хрусталев Ленин орденĕ тата «За отвагу» медаль илнĕ. Çавăн пекех ВЛКСМ Обкомĕн инструкторĕ пулнă, халĕ капитан Г. К. Кузьмин Хĕрлĕ ялав орденĕ илнĕ тата ыттисем те.

Тылра юлнă комсомолецсемпе çамрăксем ирсĕр тăшмана хăвăртрах аркатса тăкассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ, фронта тĕрлĕ майсемпе пулăшса тăраççĕ.

Чкаловски районри «РОКК» колхоз çамрăкĕсем боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума укçа пухас ĕçе пуçарчĕç. Вĕсен пархатарлă примерне республикăри мĕнпур комсомолецсем хăвăрт йышăнса илчĕç. Ку ĕçе уйрăмах колхозсенчи çамрăксем вăйлăн хутшăнчĕç. Комсомолăн республикăри организацийĕ çак ĕç валли кĕске вăхăт хушшинчех 6.000.000 тенкĕ укçа пухса, СССР хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховнăй Главнокомандующине Сталин юлташа рапорт пачĕ. Аслă Сталин республикăри комсомолецсемпе çамрăксене хĕрӳллĕ салам ячĕ тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ. Çулпуçăн тăванла саламĕ çак ĕçе татах та вăйлăнрах туса пыма çĕклерĕ. Самолетсен эскадрильине тума, татах 5 миллион тенкĕ укçа пухăнчĕ. Çапла вара паянхи кун тĕлне Чăваш комсомолĕ ячĕпе тăракан самолетсен эскадрильине тума пĕтĕмпе 11.000.000 тенкĕ укçа пухăнчĕ. Малта пыракан комсомолецсем çак ĕç валли 15—20 пиншер тенкĕ е пĕр уйăхри ĕçукçине пачĕç.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уяв ячĕпе боецсемпе командирсем патне пĕр вагон продуктсем ятăмăр. Унта 1.025 килограмм какай, 170 килограмм колбаса, 100 килограма яхăн çу, 135 килограмм пыл, 255 килограмм премĕк, 170 килограмм махорка, 230 литр эрех тата уйрăм посылкăсем 670. Действующи çарăн пĕр чаçĕнчи боецсемпе командирсем валли 5.000 ытла художествăллă литература кĕнекисем ятăмăр.

Республикăри колхозсемпе МТС-сенчи комсомолецсемпе çамрăксем танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» ятлă колоннисене тунă çĕре активлăн хутшăнчĕç. Кунсăр пуçне республикăри комсомолецсемпе çамрăксем пухнă укçапа вăрçă пуçлансанах «Комсомолец Чувашии» бронепоезд тата «Пионер Чувашии» танк туса фронта ăсатнă.

Анчах фронта пулăшас тĕлĕшпе ку таринччен тунă ĕçсемпе лăпланса ларма юрамасть. Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсене пирĕн фронта вăйлăнрах пулăшнипе ответлемелле.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Америкăри государство тата çарпа общество деятелĕсем Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа янă саламсем

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа США-ри паллă деятельсем чылайĕшĕ Совет Союзне саламсем янă.

США ПРЕЗИДЕНЧĔН АРĂМĔ ЭЛЕОНОРА РУЗВЕЛЬТ

Халĕ кашни çынах вырăс çарĕн паттăрлăхне тивĕçлипе хакласшăн. Сталинграда хӳтĕлени çинчен, ăна хӳтĕлекенсем çав тери чунтан парăнса çапăçни çинчен, этем нихăçан та курман çав тери пысăк испытани тӳсни çинчен пĕтĕм тĕнче яланах асăнĕ. США гражданĕсем вырăс çарне тивĕçлипе хакласа ăна ăнăçусем тума сунаççĕ.

ФИНАНС МИНИСТРĔ МОРГЕНТАУ

Хăшпĕр чухне сăмах сахалтарах каласан лайăхрах пулать. Çырупа çырса кирек епле савăнса хĕпĕртени те Хĕрлĕ Çарăн паттăр çитĕнĕвĕсем çинчен çĕнĕрен нимĕн те каласа пулĕччĕ. Тăван çĕршывăн сивĕ, шурă юр витнĕ сарлакăшĕсенче Хĕрлĕ Çар хăйĕн юнне тăкса вилĕмсĕр чыслăх паллине хăварчĕ. Пĕтĕм тĕнчери йĕркеллĕ, цивилизациллĕ çынсемшĕн кил, çемье, тăван çĕршыв яланах этем пурнăçне вырăнлă тăвакан чи хаклă япаласем шутланса хисепленнĕ. Хĕрлĕ Çарăн хавхалантаракан тĕслĕхне пула эпир, цивилизациллĕ тĕнчери ытти халăхсем пекех, пурнăçăн чăн-чăн пĕлтерĕшне лайăхрах ăнланма пуçларăмăр.

ГОСУДАРСТВЕННЫЙ СЕКРЕТАРĔН ЗАМЕСТИТЕЛĔ УЭЛЛЕС

Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă май эпĕ советсен хĕçпăшаллă вăйĕсем тунă çав тери паллă çитĕнӳсене курса кашни американецах хĕпĕртенине палăртма хавас. Мускава, Ленинграда тата Сталинграда çав тери паттăррăн хӳтĕленĕ хыççăн вăл çарсем тискер захватчиксене хирĕç çав тери чаплă наступлениллĕ çĕнтерӳсем турĕç, туса пыраççĕ те. Вĕсен çĕнтерĕвĕсем тĕнчен нумай пайĕсенче çĕр çинче, тинĕсре тата сывлăшра агрессие хирĕç туса пыракан пĕрлешнĕ нацисен вăйĕсене çав тери аслă тата хавхалантаракан тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Ирĕклĕхе юратакан кашни арçынпа хĕрарăмах вĕсем хавхалантарса тăраççĕ.

РУЗВЕЛЬТĂН СПЕЦИАЛЬНĂЙ ПОМОЩНИКĔ ТАТА СОВЕТНИКĔ ГАРРИ ГОПКИНС

Хĕрлĕ Çарăн çак вăрçăри ăнăçăвĕсем пĕтĕм историри чи паллă вăрçă çитĕнĕвĕсенчен пĕри пулса тăраççĕ. 18 вăрăм уйăхсем хушшинче Хĕрлĕ Çар хăйĕн юратнă çĕршывне пĕтĕм историри чи вăйлă тапăнуран хӳтĕлесе тăчĕ. Сталинградшăн пынă вилĕмсĕр çапăçăва вĕçлесе, вăл тăшман малалла каяссине чарса лартрĕ çеç мар, контрнаступлени те пуçласа ячĕ. Вăл наступлени халь Ленинградран пуçласа Кавказа çити тăсăлса выртакан пĕтĕм фронтпах сарăлса пырать. Хĕрлĕ Çар хăйĕн никам çĕнтерейми арçынĕсемпе, хĕрарăмĕсемпе тата тивĕçлĕ руководителĕсемпе пĕрле, ăна Российăри кашни арçынпа хĕрарăмах пĕтĕм вăйран пулăшса тănипе, гитлерла вăйсене пурпĕрех аркатса тăкас никĕсе хыврĕ.

Кунсăр пуçне совет халăхне ак çаксем саламланă: çар министрĕн заместителĕ Патерсон, Тинĕс флочĕн министрĕн помощникĕ Бард, сенатор-демократ Боун, представительсен палатин вăрçă ĕçĕсене пăхакан комиссийĕн председателĕ Мэй, институт директорĕ профессор Сидтерист, драматург Лилиан Хэльман, Америкăри ĕç федерацийĕн председателĕ Грин, производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей, Флоштатĕнчи сенатор-демократ Флорида Пеппер.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине Англире уявлани

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Лондонри чи пысăк çуртсенчен пĕринче, Альберт-Холл çуртĕнче Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине уявланă. Уявра Англи правительствин членĕсем, союзла çĕршывсен правительствисен членĕсем тата дипломатиллĕ корпус представителĕсем пулнă. Англи çарĕнчен уявра нумай паллă офицерсем, вăл шутра фельдмаршал лорд Горт пулнă.

Уяв пуххине уçса, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден уявра пулнисене вилнĕ совет воинĕсен ятне пĕр минута хушши шăп пулса чыслама ыйтнă.

Ун хыççăн вара Россия пĕтĕм хăйĕн историйĕ тăршшĕнче ют çĕршывсенчен пырса тапăнакан захватчиксене епле сирсе янине кăтартса паракан театрализациленĕ обзор пуçланнă.

Уявра Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, сăмах тухса каланă.

Собранире совет посолĕ Майский тата Лондонри совет колонийĕн членĕсем те пулнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англири пур пысăк хуласенче те паян Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уява чыслăн паллă тунă. Çав майпала пулса иртнĕ собранисемпе митингсенче Англири министрсенчен тата ертсе пыракан деятельсенчен çаксем тухса каланă: премьер-министрăн заместителĕ Эттли — Кардифра, авиаци промышленноçĕн министрĕ Стаффорд Криппс — Шеффильдра, шалти ĕçсен тата шалти хăрушсăрлăх министрĕ Моррисон — Брайтонра, вăрçă производствин министрĕ Литтлтон — Манчестерта, Тинĕс флочĕн министрĕ, Александер — Бристольре, суту-илӳ министрĕ Дальтон — Бирмингамра, Ланкастер графствин герцогĕ Дафф Купер — Глазгора.

Лондонра тата ытти хуласенче уявланă вăхăтра каланă сăмахсене Рейтер агентстви кайран тĕплĕнрех пĕлтерет.

Рузвельт тата Чан Кай-ши арăмĕ пресс-конференцире тунă заявлени

ВАШИНГТОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă çуртра пресс-конференци пулса иртнĕ, ăна Рузвельтпа Чан Кай-ши арăмĕ пĕрле тунă. Пичет представителĕсем умĕнче тунă хăйĕн выступленийĕнче госпожа Чан Кай-ши США-ран Китая хĕçпăшалсем ытларах яма ыйтнă. Вăл тата çакна палăртнă: Китайра хатĕрленнĕ летчиксем пур, анчах самолетсем çитмеççĕ, тенĕ.

Хăйĕн выступленийĕнче Рузвельт çакна палăртнă: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Китая пулăшассине ӳстереççĕ тата малашне те ӳстерсе пыма шутлаççĕ, тенĕ. Китая çар материалĕсем сывлăш тăрăх куçарас тĕлĕшпе США пур майсемпе те усă курма шутлать, тенĕ Рузвельт.

„Индие хӳтĕлекен лига“ Гандие ирĕке кăларма ыйтать

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Индие хӳтĕлекен лига» февралĕн 18-мĕшĕнче Лондонра пухнă митингра Гандие халех ирĕке кăларма кирли çинчен тата Англи правительствипе Инди лидерĕсем хушшинче тепĕр хут калаçу пуçласа яма кирли çинчен пĕр сасăпа резолюци йышăннă.

Агентство пĕлтернĕ тăрăх, «Индие хӳтĕлекен лига» секретарĕ Менон, митингра тухса каласа, Инди вице-королĕ çумĕнчи исполнительнăй комитетăн виçĕ членĕ отставкăна тухни епле вырăн йышăнса тăнине палăртнă, Инди халăхĕн пур сийĕсем те Гандие ирĕке кăларассишĕн тăраççĕ, тенĕ.

„Я н м у р з и н о“ колхоз вăрçă кунĕсенче

Сталин юлташ колхозсем умне çĕршывпа фронт валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса тăрас задача лартрĕ.

Пирĕн «Янмурзино» колхозри колхозниксем Сталин юлташăн кăтартăвĕсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. 1942 çулта çуракине эпир пысăк пахалăхпа 7 кун хушшинче туса ирттертĕмĕр. Тырăсене пурне те вăхăтра вырса пуçтартăмăр. Тислĕкпе тата минераллă удобренисемпе апат парса тăнă тата фекали тăкнă участоксенчен вăйлă тырпул туса илтĕмĕр. Пăри — 17 центнер, çурхи тулă — 18 центнер, пăрça — 16 центнер тухрĕ. Ф. Осипов юлташăн бригади кашни гектартан пăрça, тулă, сĕлĕ 22-шер центнера яхăн туса илчĕ.

Колхозниксем тырпула çумкурăкĕсенчен тăтăшах тасатса тăчĕç. Ку ĕçре колхозниксене Упири вăтам шкулта вĕренекен ачасем пысăк пулăшу пачĕç. Çак вăхăтра вара колхозниксем колхозри ытти ĕçсене вăхăтра туса пычĕç.

Колхоз 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, нумай лайăхрах вĕçлерĕ, нумай колхозниксем хăйсен кулленхи ĕç нормисене 2—3 хут ли ясли организациленĕ. Вăл пирĕн ирттерсе тултарса пычĕç. Эпир, пур хĕрарăмсем те ĕçе активлăн хутшăнччăр тесе, колхозра ачасем вал-

П. Ефремов юлташ.

ли ясли организациленĕ. Вăл пирĕн уйхир ĕçĕсем вĕçленичченех ĕçлерĕ. Çавна май колхозницăсем ĕçкунĕсен минимумне ирттерсе тултарма пултарчĕç. Çулталăк хушшинче Анна Тихонова 404 ĕçкунĕ, пĕчĕк ача амăшĕ — Марфа Петрова 309 ĕçкунĕ, 60 çултан иртнĕ Вера Тимофеева 238 ĕçкунĕ тунă.

Анчах та хăшпĕр колхозниксем ĕçкунĕсен минимумне тултарман. Иккĕмĕш бригадăри Елена Семеновăпа Мария Хрисанова пĕр урамра пурăнаççĕ. Вĕсен иккĕшĕн те пĕр вăхăтра çуралнă çамрăк ачасем пур. Вĕсенчен пĕри — Мария Хрисанова 208 ĕçкунĕ тунă. Вăл пĕр ĕçрен те юлман. Çак вăхăтрах Елена Семенова çулталăк хушшинче пурĕ те 92 ĕçкунĕ çеç тунă. Çавнашкалах Евгения Осипова, Нина Александрова та ĕçкунĕсен минимумне тултармарĕç. Çак колхозницăсем, паллах ĕнтĕ, хăйсен тивĕçлĕхне çителĕксĕр пурнăçласа пынă.

Кунта эпĕ подростоксен ĕçне уйрăмах паллă тăвасшăн. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене туса пынă çĕрте, уйрăмăнах халĕ, колхозра подростоксен ĕçĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Михайлова Матрена 12 çулта, Упири вăтам шкулăн 6-мĕш класĕнче вĕренет. Вăл 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене хутшăнса 115 ĕçкунĕ турĕ. Колхозниксене каннă вăхăтра вăл яланах хаçатсем вуласа панă.

Манăн тата колхоз çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен чарăнса тăрас килет. Çуракине хатĕрленес ĕç вăл ялхуçалăхĕнче чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та пирĕн колхозниксем кăçалхи çул иртнĕ çулхинчен те вăйлăрах тырпул туса илессишĕн вăрçă вăхăтĕнчи пек, Сталин юлташ ыйтнă пек ĕçлеççĕ.

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ войскăсене панă приказа вуланă хыççăн, колхозниксем çуракине хатĕрленес ĕçе тĕпренех вăйлатрĕç. Бригадăпа бригада, звенопа звено, колхозникпа колхозник социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Ăмăртăвăн малтанхи кунĕсенче 2-мĕшпе 4-мĕш бригадăсем мала тухрĕç. Ку бригадăсенчи колхозниксем Марфа Петрова, Ефросиния Герасимова, Федосия Белова тата ыттисем те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсене хуть те мĕнле ĕç хушсан та, ăна вĕсем çине тăрса пурнăçлаççĕ.

Паянхи кун тĕлне колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех сортласа хунă, уя 4.200 лав ытла тислĕк кăларнă, 82 центнер фекали, 92 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Çавăн пекех 120 центнер минераллă удобренисем тата кĕл хатĕрленĕ. Ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса çитернĕ. 200 гектар çинче юр тытса хăварнă. Кăçал эпир кашни гектартан 18 центнер тырă туса илессишĕн «Коминтерн» колхозпа ăмăртатпăр.

Пирĕн колхозăн тимĕрçи Лаврентий Гордеев хăйĕн обязательствине чыслăн пурнăçласа пырать. Вăл халь хамăр колхозăн машинисене юсанисĕр пуçне, «Родина» колхоза 12 плуг юсаса пачĕ. Халĕ Байсубино ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз машинисене юсать.

Лашасем çуракинче тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Çакна пирĕн кашни колхозник пĕлсе тăрать: ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе ЧАССР Совнаркомĕ «Лашасене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтерессии çинчен» йышăннă постановленине кашни колхознике ăнлантарса панă.

Пирĕн колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. Кăçалччен колхозра сурăх тата хур фермисем пулман. Фронта ытларах аш-какай парса тăрас тесе, кăçал эпир сурăх тата хур фермисем организацилерĕмĕр, выльăхсем ĕрчетмелли плана тултартăмăр. Енесен тухăçлăхне ӳстертĕмĕр. 1941 çулта кашни ĕнерен 905 литр сĕт суса илнĕ пулсан, 1942 çулта кашни ĕнерен 1.100 литр сĕт суса илнĕ. Фермăсем 1942 çулта колхоза 34.352 тенкĕ тупăш пачĕç.

Колхозниксем кăçал Хĕрлĕ Çар фондне 900 пăт тырă, 8 центнер какай пачĕç. Колхоз 1943 çулшăн натуроплата шучĕпе аванс пачĕ, государствăна аш-какай памалли обязательствăна 62 процент пурнăçларĕ.

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа фронтри боецсем патне парнесем ярса патăмăр. Пурĕ 80 килограмм аш-какай, 50 штука çăмарта, 305 килограмм тăварланă купăста, çу тата ытти çимĕçсем янă.

Хĕрлĕ Çарăн паха çитĕнĕвĕсем пире татах та лайăхрах ĕçлеме хушаççĕ. Эпир малалла тата лайăхрах ĕçлеме сăмах паратпăр.

П. ЕФРЕМОВ,
ЧАССР Верховный Совет депутачĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1256 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.